27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
МАЙ
21
ВЫРСАРНИКУН
100(6695) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАЙӐН 19-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Майӑн 19-мӗшӗнче фронтсенче палл улшӑнусемех пулман.

Майӑн 18-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем имӗҫсен 14 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 43 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Станислав хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре тӑшман пехоти ирхине ирех пирӗн позицисене атакӑланӑ. Кӑҫ пуличченех хаяр ҫапӑҫу пынӑ. Нимӗҫсем, хӑйсен вӑйӗ темӗн чухлӗ пӗтнине пӑхмасӑрах, пӗр вырӑнти пӑха позицие тытса илме хӑтланнӑ, анчах та пирӗннисем вӗсене питӗ вӑйлӑ хирӗҫ тӑнӑ. Совет боецӗсем тӑшман атакисене пурне те сирсе янӑ. Ҫапӑҫура 300 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫитя пӗтерсе тӑкнӑ, 7 танк персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Тепӗр участокра пирӗн разведка отрячӗ тӑшман тӑнӑ вырӑна кӗрсе кайнӑ та гитлеровецсен пӗр ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ. Разведчиксем, пӗр нимӗҫ офицерне тата 2 салтака тыткӑна илсе хӑйсен чаҫне тӗрӗс-тӗкӗл таврӑннӑ.

* * *

Тирасполь хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр гвардейски часть тӑшманӑн темиҫе атакине сирсе янӑ. Малтан нимӗҫсем пирӗн позицисем ҫине савӑлланса кӗнӗ пулнӑ. Анчах та гвардеецсем ҫийӗнчех ҫавӑрса илмелли ӑста маневр тунӑ та тӑшмана питӗ хӑрушӑ условисене кӗртсе лартнӑ. Нимӗҫсем вара каялла чакнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсем 500 ҫынна ҫити вилсе е аманса выртса юлнӑ. Нимӗҫсен 6 танкне тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен пӗр туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

* * *

Витебск хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пӗр чаҫри подразделенисем тӑшман оборонин малти хӗррине атакӑланӑ. Икӗ сехет хушши ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн пирӗн боецсем ҫирӗплетнӗ ҫӳллӗ вырӑна туртса илнӗ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

Пӗр соединени чаҫӗнче снайпер шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ хӗрсен ушкӑнӗ ӑнӑҫлӑ кӗрешет. Апрелӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа майӑн 14-мӗшне ҫитиччен ҫав хӗрсем 300 нимӗҫе ытла вӗлернӗ. Р. Шанина ефрейтор 15 гитлеровеца, Е. Красноборова ефрейтор—14, Л. Танойлова тата В. Смирнова ефрейторсем кашни 12-шер нимӗҫе вӗлернӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флотӗн авиацийӗ паян финсен Котка портне тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула портра пушарсем тухнӑ. Пирс ятлӑ порта, унти чылай сооруженисене сиенленӗ. Пӗр бомба причал патӗнче тӑракан судно ҫывӑхӗнчех ҫурӑлса кайнӑ. Судно вара ҫунма пуҫланӑ.

Пирӗн самолетсем пурте хӑйсен аэродромӗсене таврӑннӑ.

* * *

Совет летчикӗсем Ҫурҫӗр Норвеги ҫыранӗсем патӗнче тӑшман суднисене пырса ҫапнӑ. Бомбӑсем тӳрех пырса тивнипе хуралта ҫӳрекен пӗр караппа пӗр катер шыва путнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 7 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Украинӑн хӗвеланӑҫ облаҫӗсенче кӗрешекен партизансен отрячӗ 2 уйӑх хушшинче нимӗҫсен фронталла пыракан темиҫе вунӑ ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Ҫав крушенисенче 28 паровоз тата тӑшман ҫарӗсемпе техникине турттарса пыракан 400 вагонпа платформа ытла ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Пӗр ялта гитлеровецсем халӑха хупӑрласа илсе тытма пуҫланӑ. Вӗсем арҫынсене те, хӗрарӑмсене те нумайӗшне тытнӑ та Германи каторгине хӑваласа кайма хатӗрленнӗ. Ҫакӑн ҫинчен пирӗн партизансем пӗлнӗ. Вӗсем ҫав ҫынсене пулӑшма шут тытнӑ. Вара партизансем яла ҫав тери хӑвӑрт ӑркӑнса кӗнӗ те нимӗҫсен отрядне аркатса тӑкнӑ. 30 гитлеровеца вӗлернӗ. Ытти нимӗҫ салтакӗсем хӑйсен хӗҫпӑшалӗсене пӑрахса тарнӑ.

* * *

Украинӑри 1-мӗш фронтӑн пӗр участокӗнче Хӗрлӗ Ҫар енне венгерсен 25-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 25-мӗш полкран 22 салтак куҫнӑ. Тепӗр районра пирӗн енне венгерсен 57-мӗш пехотнӑй полкӗнчен 19 салтак куҫнӑ. Тарса каҫнӑ салтаксем хӑйсемпе пӗрле винтовкӑсем тата 6 ручной пулемет илсе килнӗ. Капрал Х. ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Эпир Венгрире чухнех нимӗҫсемшӗн вӑрҫас мар тесе каласса татӑлтӑмӑр. Май пулсанах тыткӑна парӑнмалла, терӗмӗр. Пире боевой охранение ярсан, эпир, ҫакӑнпа усӑ курса, вырӑссен енне тарса каҫрӑмӑр». Ҫав кунах венгерсен 27-мӗш полкӗнчи 5 салтакпа 2 капрал фронт тӑрӑхӗнчи пӗр ялти хресчене хӑйсене Хӗрлӗ Ҫар енне каҫарса яма ыйтнӑ. Хресчен вӗсене пурне те пирӗн ҫарсем тӑракан вырӑна илсе килнӗ.

* * *

Латви ССР-ӗн Даугавпилс хулинче (Двинск) пурӑннӑ темиҫе ҫын нимӗҫсен тӗрминчен тухса тарнӑ. Совет гражданӗсем фронт линийӗ урлӑ тӗрӗс-тӗкӗлех каҫса тухнӑ. Вӗсем ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Даугавпилс хулине тытса илсен, нимӗҫсем пур магазинсемпе хваттерсене те ҫаратса тухрӗҫ. Гитлеровецсем хулана тытса илнӗ-илменех мирлӗ халӑха йышлӑн тытса хупма тата персе пӑрахма пуҫларӗҫ. Нимӗҫ ирсӗрӗсем советсен мӗнле те пулин обществӑллӑ организацийӗнче тӑнӑ гражданссене пинӗ-пинӗпе тытса вӗлерчӗҫ. Профсоюз членӗнче, МОПР членӗнче тӑнӑшӑн та, клубсене ҫӳренӗшӗн те айӑпласа пере-пере пӑрахрӗҫ. Нимӗҫсем совет ҫыннисене тӗрмере хыҫӗнче, чугун ҫул паркӗнче, ӗҫ пӗтернӗ хыҫҫӑн канмалли дачӑсем ларакан вырӑнсенче вӗлеретчӗҫ. Фашистла нимӗҫ хуралхӗсем малтанхи 6 уйӑх хушшинче кӑна хулари 10.000 ҫынна ытла персе е асаплантарса вӗлерчӗҫ. Совет гражданӗсене темӗн чухлех тӗрмене хупса лартрӗҫ. Хула тӗрмин 4 хутлӑ корпусӗн мӗнпур камерӗсем ҫынсемпе тулса ларнӑ. Хӗлле ҫав тӗрмене пӗрре те хутман. Унта хупса лартнӑ ҫынсем шӑпса пӑсӑлнӑ, сивӗпе, выҫӑпа, хӗнениппе тата асаплантарнипе вилнӗ. Допроссенче гестаповецсем темиҫе ҫӗр ҫынна, вӑл шутра врачсене, учительсене тата интеллигенцин ытти представителӗсене асаплантарса вӗлернӗ. Ҫак фашистсем уйрӑмах тискеррӗн хӑтланнӑ: Крист, Циртис, Штакан тата тӗрме начальникӗ Лаздан».

Маршал И. В. Сталин Югослави генералӗсене Терзичпа Джиласа йышӑнни

Майӑн 19-мӗшӗнче Совет Союзӗн Маршалӗ И. В. Сталин Югославин халӑха ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен ҫарӑн представителӗсене—ҫар миссин пуҫлӑхне Терзич генерала тата ҫар миссин членне Джилас генерала йышӑннӑ.

Арми генералне Ф. И. Толбухина 1-мӗш степень Суворов орденне пани

Майӑн 19-мӗшӗнче СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ арми генералне Ф. И. Толбухина 1-мӗш степень Суворов орденне панӑ. Арми генералне Ф. И. Толбухина ҫав орденпа боевой операцисене пӗлсе те хӑюллӑн ертсе пынӑшӑн тата, ҫав операцисене пула фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче ҫитӗнӳсем тунӑшӑн наградӑланӑ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Советӗнчен

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Мускавпа пӗтӗм Русӗн Святейши Патриархӗ Сергий вилнӗ пирки Православнӑй Вырӑс Чиркӗвӗн Священнӑй Синодне унпа пӗрле хӑй те хытӑ хуйхӑрни ҫинчен пӗлтернӗ.

Сергий Патриарха пытарни

Ҫак ҫулхи майӑн 18-мӗшӗнче Мускавра Патриархсен Кафедральнӑй Богоявленски Соборӗнче Мускавпа пӗтӗм Русӗн вилнӗ Святейши Патриархне Сергие юрӑсем юрласа кӗлтуса пытарнӑ.

Патриарх ӳтне хунӑ тупӑка китрен илемлетсе пӗтернӗ, ӑна Собора лартнӑ, Патриарх мантийӗпе тата чечексемпе витнӗ.

Вилнӗ Патриарха юрӑсем юрласа кӗлтуса ӑсатма Алексий, Николай, Иоанн митрополитсем, вунпӗр епископ тата Мускав духовенствин ҫӗр представителӗ ытла пынӑ.

Патриарха пытарма Богоявленски Соборӑн тата Мускаври ытти чиркӳсен епископсен прихожанӗсем питӗ йышлӑн пуҫтарӑннӑ.

Патриарха пытарма СССР Совнаркомӗн представителӗ Г. Г. Карпов пынӑ.

Кӑнтӑрла иртсен 4 сехет тӗлӗнче епископсен траурлӑ пысӑк процессийӗ тупӑка йӑтса тата элемсем ҫӗклесе Собор тавра ҫаврӑннӑ, вара Патриарха ҫавӑнтах, Соборта, пытарнӑ. (ТАСС).

Кая юлсан — каю шӑтать

Тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене мӗнпур хӑвачӗпе ӗҫлеттерер, колхоз уйхирӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑрах сарар, ҫуракине хӑвӑртрах вӗҫлер!

ҪӖРПӲПЕ ВӐРНАР МТС-ӗсем ҪУРАКИНЧИ ӖҪСЕН ПЛАННЕ ТУЛТАРЧӖҪ

Красноармейскипе Шӑхасан МТС-ӗсем хыҫҫӑн, Ҫӗрпӳпе Вӑрнар МТС-ӗсем те тракторсемпе тумалли ҫуркуннехи ӗҫсен планне тултарчӗҫ.

Ҫӗрпӳ МТС-ӗ 2.910 гектар вырӑнне 2.936 гектар сухаларӗ, ҫав вӑхӑтрах 1.800 килограмм горючи перекетлесе хӑварчӗ.

Уйрӑмӑнах тракторсен 10-мӗш бригади (бригадирӗ Степанов юлташ) лайӑх ӗҫленине палӑртмалла. Вӑл плана 158 процент тултарнӑ, 800 килограмм горючи перекетленӗ. Ун хыҫҫӑн Иванов юлташ ертсе пыракан 3-мӗш бригада пырать. Вӑл ҫуркуннехи ӗҫсен планне 139 процент тултарнӑ, 330 килограмм горючи перекетленӗ. Кириллов ертсе пыракан бригада плана 134 процент, Коночкин бригади 131 процент тултарнӑ.

Вӑрнар МТС-ӗ ҫуракине тухнӑранпа 4.352 гектар сухаланӑ, план тӑрӑх унӑн ҫураки вӑхӑтӗнче 4.345 гектар ҫинчи ӗҫе тумалла пулнӑ.

Тракторсен 4-мӗш номерлӗ бригади (бригадирӗ К. Тойдеряков юлташ) ҫураки вӑхӑтӗнче тумалли ӗҫсен планне 113 процент тултарнӑ. Ҫак бригадӑри чи лайӑх трактористсем А. М. Макаровпа И. Е. Егоров юлташсем сменӑра 4-шар гектар вырӑнне 7—9,6-шар гектар сухаларӗҫ, Т. Ильина тата М. Волкова юлташсем СТЗ маркӑллӑ тракторпа 6 гектар сухаларӗҫ.

И. Н. Николаев юлташ ертсе пыракан 6-мӗш номерлӗ бригада та ҫураки вӑхӑтӗнчи ӗҫсен планне 101 процент тултарнӑ. Трактористка Семенова юлташ сменӑри нормӑна 150 процент тултарать.

Тракторсен 7-мӗш номерлӗ бригади те (бригадирӗ И. Алексеев юлташ) ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 104 процент тултарнӑ, 265 гектар вырӑнне 275 гектар сухаланӑ.

Йӗпреҫпе Елчӗк МТС-ӗсем плана 90-шар процент тултарнӑ

ЙӖПРЕҪ, майӑн 20-мӗшӗ. (**Телефонпа**). МТС майӑн 19-мӗшӗ тӗлне тракторпа тумалли ӗҫсен планне 90 процент тултарнӑ. Макаров ертсе пыракан бригада малта пырать, вӑл плана 115 процент тултарнӑ. Ҫак бригадӑри Макаровпа Пирогов трактористсем кашни кунах 4 гектар вырӑнне 6,5—7 гектар сухаларӗҫ.

Тракторпа кӑҫал ҫеҫ ӗҫлеме тытӑннӑ ҫамрӑк трактористка Радюкова юлташ СТЗ тракторпа кулленхи заданине ытлашшипех тултарать. Пурӗ вӑл 65 гектар ытла сухаланӑ. Трактористка Васильева юлташ та У—2 маркӑллӑ тракторпа 60 гектар сухаланӑ. Тракторист Зорин юлташ газогенераторлӑ тракторпа майӑн 19-мӗшӗ тӗлне 90 гектар вырӑнне 105 гектар сухаланӑ та ӗнтӗ.

МТС-ри ҫамрӑксен трактор бригади (бригадирӗ Семенов юлташ) ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 110 процент тултарнӑ.

* * *

ЕЛЧӖК, майӑн 20-мӗшӗ. (**Телефонпа**). МТС ӗнерхи кун тӗлне тракторсемпе тумалли ӗҫсен планне 90 процент ытларах пурнӑҫларӗ. Тракторсен пилӗк бригади плана ытлашшипех тултарчӗҫ.

Кӑҫал та, иртнӗ ҫулхи пекех, Г. Струнков юлташӑн бригади малта пырать. Ҫак бригада плана 120 процент тултарнӑ тата ҫав вӑхӑтрах 275 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ. Бригадӑри паллӑ стахановка Л. Уткина юлташ ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 200 процент ытла тултарнӑ. Лукияновпа Порфирьев трактористсем те хӑйсен планне 180-шар процент тултарнӑ.

Тракторсен 8-мӗш бригади (бригадирӗ П. Марков юлташ) плана 111 процент тултарнӑ, 500 килограмм горючи перекетленӗ. А. Гордеева А. Маркелов трактористсем кашнинех 90 гектар сухалас вырӑнне 140-шер гектар сухаланӑ.

А. Павлов ертсе пыракан тракторсен 6-мӗш бригади те майӑн 19-мӗшӗ тӗлнех ҫуркуннехи ӗҫсен планне 103 процент тултарнӑ. Ҫак бригадӑра уйрӑмах Ахматуллин тракторист питӗ тухӑҫлӑ ӗҫлет. Вӑл планпа 90 гектар сухалас вырӑнне 150 гектар сухаланӑ.

Тракторсен 7-мӗш бригади (бригадирӗ Охотин юлташ) ҫуркуннехи ӗҫсен планне 107 процент тултарнӑ. Ҫак бригадӑри тракторист Волков юлташ «НАТИ» маркӑллӑ тракторпа 230 гектар сухаланӑ.

Пур бригадӑсенче те тракторпа тунӑ ӗҫсен пахалӑхӗ аван. Пирӗн МТС тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне тултарать.

П. ЯШИН,
МТС директорӗ.

Чӑваш АССР Наркомземӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн ялхуҫалӑх отделӗ тӑратнӑ тӑрӑх, тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне срокчен пурнӑҫланӑшӑн ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп Хӑми ҫине ҫак МТС-а кӗртнӗ:

13. **Ҫӗрпӳ МТС-ӗ** (директорӗ **М. Г. Арзамасов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Баранов** юлташ, старши механик **Коночкин** юлташ). МТС тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 100,8 процент тултарнӑ, 2.910 гектар вырӑнне 2.936 гектар сухаланӑ, 1.800 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Чи лайӑх бригадирсем: Г. С. Степанов, унӑн бригади ҫуркуннехи ӗҫсен планне 158 процент тултарнӑ, 800 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ; **Иванов**—плана 139 процент тултарнӑ, 330 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ; **Кириллов**—плана 134 процент тултарнӑ; **Коночкин** — 131 процент тултарнӑ тата 300 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Ҫуракинче тухӑҫлӑ та лайӑх ӗҫленӗшӗн, ӗҫҫынни депутачӗсен Вӑрнар райсовечӗн исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп Хӑми ҫине ҫак трактор бригадисене кӗртнӗ:

14. **4-мӗш номер трактор бригади** (бригадирӗ **К. Г. Тойдеряков** юлташ). Вӑл тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 113 процент тултарнӑ.

Чи лайӑх трактористсем: А. М. Макаров, И. Е. Егоров юлташсем, вӗсем СХТЗ маркӑллӑ тракторпа кашни сменӑра 4 гектар вырӑнне 7—9-шар гектар сухаланӑ; **Т. И. Ильина** тата **М. Волкова** юлташсем, вӗсем 4 гектар вырӑнне 5,2—6-шар гектар сухаланӑ.

15. **6-мӗш номер трактор бригади** (бригадирӗ **И. Н. Николаев** юлташ). Вӑл тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 101 процент тултарнӑ.

Чи лайӑх трактористка К. С. Семенова юлташ, вӑл СХТЗ маркӑллӑ тракторпа сменӑра 4 гектар вырӑнне 5—6,5-шер гектар сухаланӑ.

16. **7-мӗш номер трактор бригади** (бригадирӗ **И. А. Алексеев** юлташ). Вӑл тракторпа ҫуркунне тумалли ӗҫсен планне 104 процент тултарнӑ.

Чи лайӑх трактористкӑсем: У. П. Порфирьева юлташ, вӑл СХТЗ маркӑллӑ тракторпа кашни сменӑра 4 гектар вырӑнне 4,5—5-шер гектар сухаланӑ, акасса сменӑра 24 гектар таран акнӑ; **Каирова** юлташ, вӑл У—2 маркӑллӑ тракторпа 2,5 гектар вырӑнне 4—5-шер гектар сухаланӑ.

Калинино районӗ пӗрчӗллӗ тырӑсене акса пӗтерчӗ

Майӑн 19-мӗшӗнче Калинино районӗнчи пур колхозсем те пӗрчӗллӗ тырӑсене акса пӗтернӗ. Пурӗ 8.869 гектар акнӑ, вӑл акмалли ҫӗр лаптӑкӗн 75 процентчӗ пулать. Ҫав шутран 3480 гектарне сеялкӑсемпе акнӑ.

Каҫхине ВКП(б) райкомӗнче ҫураки вӑхӑтӗнче лайӑх ӗҫленӗ колхозсен председателӗсен канашлӑвӗ пулса иртнӗ. Пӗрчӗллӗ тата пӑрҫа йышши культурӑсене акасси мӗнле иртни ҫинчен тата умра тӑракан задачӑсем ҫинчен ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Кудряшов юлташ доклад туса панӑ.

Кудряшов юлташ «Броневик» (председателӗ Федоров юлташ), «Клевер» (председателӗ Васильев юлташ), «Трактор» (председателӗ Журавлев юлташ) колхозсем ҫураки вӑхӑтӗнче уйрӑмах кӑтартуллӑ ӗҫленине, ҫав вӑхӑтрах «Молния», Сталин ячӗпе тӑракан колхозсем япӑх ӗҫленине палӑртнӑ. Районри 12 колхозра ака ӗҫӗсем тӑсӑларах пынӑ, ҫавӑнпа та вӑл колхозсене тракторсем яма тата вӗсене ытти колхозсенчи туртӑм вӑйӗпе пулӑшма тивнӗ.

Районри колхозсем халӗ каярах акакан тырӑсемпе техникӑллӑ культурӑсене акма тата ҫӗрулми лартма тытӑннӑ.

Колхозсем пӗр-пӗрне пулӑшаҫҫӗ

ВӐРНАР, майӑн 19-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Районри колхозсем тӗштырӑсемпе пӑрҫа ясмӑксене акса пӗтерсе пыраҫҫӗ. Малта пыракан колхозсем каярах юлнӑ колхозсене ака ӗҫӗнче социализмлӑ пулӑшу параҫҫӗ.

Районра «Память Ленина» колхоз кӑҫал тӗрлӗ сӑлтавсемпе акара кая юлчӗ. Пӗрчӗллӗ тырӑсене майӑн малтанхи кунӗсенчех акса пӗтернӗ «Волга» колхоз «Память Ленина» колхоза пулӑшма 8 плугпа 16 лаша ячӗ, кӗске вӑхӑт хушшинчех вӗсем 30 гектар сухаласа пачӗҫ. «Трудовик» тата Крупская ячӗпе тӑракан колхозсенче лашасем вӑйсӑртарах, вӗсене ӗҫ вӑхӑтӗнче час-часах кантарма тивет. Кантарнӑ вӑхӑтра лашасене тӑварса, вырӑнтах курӑк ҫине ярса ҫитереҫҫӗ, конюхсем нумайӗшӗсем хиртех, лашасем патӗнче ӗҫлеҫҫӗ.

Чылай колхозсем ҫӗрулми лартмалли вырӑнсене, йӗтӗн-кантӑр акмалли лаптӑксене сухаласа хатӗрлерӗҫ. Ҫӗрулми лартас тата техникӑллӑ культурӑсем акас ӗҫ массӑллӑн пуҫланса каять.

И. ДАНИЛОВ,
Райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономӗ.

Фермӑсен ҫумӗнчи участоксене акаҫҫӗ

Колхозсенчи фермӑсенче ӗҫлекенсем колхоз выльӑхӗсем валли фермӑсем ҫумӗнчи участоксене ҫӗрулми, тымар-ҫимӗҫ, вика тата силос культурисем акма тытӑнчӗҫ. Красноармейски район 70 гектар, Вӑрмар районӗ 90 гектар, Калинино районӗ 62 гектар акнӑ. Хӗрлӗ Чутай тата Шупашкар районӗнчи колхозсем те 40-шер гектар ытла акнӑ.

Анчах та республикӑра ҫак ытла та паха ӗҫ ҫителӗксӗр пырать-ха. Колхозсен пурӗ 6.080 гектар акмалла, анчах вӗсем майӑн 20-мӗшӗ тӗлне 364 гектар кӑна акнӑ-ха. Улатӑр, Октябрьски, Ҫӗмӗрле районӗсем ҫак ӗҫе хисепе хуманнине палӑртмалла. Вӗсем ҫак вӑхӑта ҫитсе те 3—4 гектар кӑна акнӑ.

Фронтовиксен ҫемьисене пулӑшма 705 гектар акнӑ

Пирӗн республикӑри колхозсем Пӑрачкав районӗнчи «Красный пахарь» колхозӑн членӗсем чӗнсе каланине ӑшшӑн кӗтсе илчӗҫ. Кашни районрах фронтовиксен ҫемьисене пулӑшма планран ирттерсе темиҫе вуншар гектар тырӑ акаҫҫӗ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, паянхи кун тӗлне республикипе 705 гектар акнӑ. Ҫак ӗҫе Калинино районӗнче уйрӑмах аван туса пыраҫҫӗ, унта пурӗ 79 гектар тӗштырӑ акнӑ. Комсомольски район 98 гектар, Муркаш районӗ 90 гектар акнӑ. Елчӗк районӗнчи «Вперед» колхоз 5 гектар, «Молот» колхоз 7 гектар, Крупская ячӗпе тӑракан колхоз 4,5 гектар акнӑ.

Анчах та Йӗпреҫ, Тӑвай, Сӗнтӗрвӑрри районӗсенчи колхозсенче ҫак ӗҫ калама ҫук начар пырать. Йӗпреҫ районӗ паянхи кун тӗлне те 9 гектар кӑна акнӑ. Райисполком председателӗн заместителӗ Зубровская юлташ «колхозсем ерӗҫмеҫҫӗ-ха»,—тесе ларать.

Лашасене юратса пӑхать

КАЛИНИНО. «Броневик» колхозри конюхсем хӑйсене ҫирӗплетсе панӑ лашасене юратса пӑхаҫҫӗ. М. Иванова конюхра 3 ҫул хушши ӗҫлет ӗнтӗ. Вӑл лашасене вӑхӑтра шӑварать, апат парать. Яланах хырчӑкласа тӑрать. Ҫавӑнпа та унӑн лашисем ывӑнмаҫҫӗ, таса та мӑнтӑр ҫӳреҫҫӗ.

Ф. НИКИФОРОВ.

Вунтӑватта кайнӑ Сережа Корнилов пурӑнакан тӑван ҫӗре (Смоленск облаҫӗнче) фашистла нимӗҫ захватчикӗсем оккупациленӗ пулнӑ. Анчах та халӑх гитлеровецсене парӑнман. Нимӗҫсен тылӗнче партизансем хӑюллӑн кӗрешме тытӑннӑ. Сережа Корнилов та алла усса ларман. Вӑл партизансене ҫав тери пысӑк пулӑшу парса тӑнӑ. Ҫавӑншӑн ӑна Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑланӑ. Халӗ Сережа Корнилов пӗр авиачаҫӑн воспитанникӗ.

Ӳкерчӗк ҫинче: ҫамрӑк совет патриочӗ, Хӗрлӗ Ялав орденӗн кавалерӗ **Сережа Корнилов.**

Г. ШИРОКОВ фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Шкулсенчи пӗлӳ тӗрӗслевӗ

ПӖРРЕМӖШ КУН ЛАЙӐХ ИРТРӖ

Шупашкарти арҫын ачасен 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнче тӗрӗслевӗн пӗрремӗш кунӗ йӗркеллӗ иртрӗ. Вӗренекенсем пурте пычӗҫ. Шкулӑн аялтипе ҫӳлти хутӗнче учительсем дежурнӑй тӑчӗҫ. Классенче — чечексем, сӗтелсем ҫинче — сӗтел ҫиттисем. Ачасем праҫникри пек таса та лайӑх тумланса пынӑ.

Иртнӗ ҫулсенче ачасем вӑскатчӗҫ, кӗнекесем ҫине пӑхса илме тӑрӑшатчӗҫ. Кӑҫал ун пек шухӑшӗ, пурте лӑпкӑн, кӗнекесем ҫине пӑхмасӑр, пӗр-пӗрне каламасӑр ответлерӗҫ. Ачасем лайӑх пӗлни паларчӗ. Тӗрӗслӳ хыҫҫӑн педогогика совечӗн ларӑвӗ пулса иртрӗ. Учительсем тӗрӗслевӗн пӗрремӗш кунӗ питӗ йӗркеллӗ иртнине саванса палартрӗҫ.

Хӑшпӗр результатсем: 5-мӗш «А» класра вӗренекенсем вырӑс чӗлхипе ҫакӑн пек паллӑсем илчӗҫ: 8 пятерка, 9 четверка, 10 тройка; 5-мӗш «Б» класра (вырӑс чӗлхипе): 8 пятерка, 13 четверка, 6 тройка; 6-мӗш «В» класра (географипе): 6 пятерка, 8 четверка, 5 тройка т. ыт. те.

Анчах хӑшпӗр классенче двойкӑсем илнисем те пулчӗҫ. Сӑмахран, 4-мӗш «Б» класра вӗренекенсем вырӑс чӗлхипе 2 пятерка, 9 четверка, 10 тройка, 4 двойка илчӗҫ. 9-мӗш класра (нимӗҫ чӗлхипе) — 3 ача двойкӑсем илчӗҫ.

Е. ФЕДИНА,
Шкул директорӗ.

Вырӑс чӗлхине тӗплӗн пӗлнине кӑтартрӗҫ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майӑн 20-мӗшӗ. (**Телефонпа, хамӑр корр.**). Кушарти пуҫламӑш шкул пӗлӳ тӗрӗслевӗсене лайӑх кӗтсе илнӗ.

4-мӗш класра вӗренекен ачасем ирех шкула шухӑнма тытӑнчӗҫ. Вӗсен сӑнӗсене пӑхсан, хумханни сисӗнет. Ачасем паян хӑйсем ҫак иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче тата унччен пуҫламӗш классенче вӗренсе мӗнле пӗлӳ туянни ҫинчен тӑван ҫӗршыва, хӑйсен ашшӗ-амӑшӗсене, учительсене тата пӗр-пӗрне отчет параҫҫӗ.

Класс руководителӗ учительница О. Иванова юлташ, пӗлӳ тӗрӗслевне хатӗрленнӗ май, халиччен мӗн вӗреннине ачасемпе тепӗр хут аса илсе тухнӑ. Тӗрӗслӳ ирттерме тӗплӗ планпа расписани туса хунӑ.

Паян вырӑс чӗлхипе сӑмах вӗҫҫӗн тӗрӗслӳ пулса иртрӗ. 4-мӗш класра вӗренекен 16 ача пурте шкула пынӑ. Икӗ сехет хушшинче вӗренекенсем вырӑс чӗлхипе 48 ыйту ҫине ответ пачӗҫ. Тӗрӗслӳре 16 ачаран 4 ача пятерка, 9 ача — четверка, 3 ача тройка илчӗҫ. Тӗрӗслевӗн малтанхи кунӗ ачасем вырӑс чӗлхине ӑнланса вӗреннине, тӗплӗн пӗлнине кӑтартса пачӗ. Г. Николаев, Е. Иванова, А. Белков, З. Иванов вӗренекенсем ыйтусем ҫине уйрӑмах лайӑх, пӗр такӑнмасӑр ответлерӗҫ. Вӗсем пӗтӗм вӗренӳ ҫулӗпех пур предметсемпе те лайӑх вӗренсе пынӑ.

Ачасем пӗлӳ тӗрӗслевне пӗр сиктермесӗр ҫӳретчӗр тесе, шкулта буфет организациленӗ. Вӗренекенсен шухӑш-кӑмӑлӗ лайӑх, вӗсем кӑҫалхи экзамена пур предметсемпе те ӑнӑҫлӑн тытассине шантараҫҫӗ.

С. ШАДИН.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммуни" 85-мĕш, 92-мĕш, 94-мĕш, 95-мĕш, 96-мĕш, 98-мĕш тата 99-мĕш номерĕсенче).

ОКТЯБРЬСКИ РАЙОН ТĂРĂХ

1. Георгий Алексеевич **Алексеева** — ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
2. Евдокия Михайловна **Андреевăна** — «20 лет Чувашии» колхозăн чăх-чĕп пăхаканне.
3. Ольга Архиповна **Архиповăна** — «Молния» колхозăн хăмла ăстаçине.
4. Валентина Семеновна **Атлашевăна**— ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарьне.
5. Харитон Федорович **Батманова** — «Авангард революции» колхозăн колхозникне.
6. Агрипина Алексеевна **Борисовăна**— «Молния» колхозри сĕт-çу фермин бригадирне.
7. Васса Егоровна **Васильевăна** — «Красный борец» колхозăн колхозницине.
8. Александра Сергеевна **Вотяковăна**— «Комсомолец» колхозăн сурăх пăхаканне.
9. Александр Яковлевич **Егорова** — райпромкомбинат директорне.
10. Степан Андреевич **Журавлева** — Наратчакки ялсоветĕн председательне.
11. Анастасия Ивановна **Ивановăна** — «Сталь» колхозăн ферма заведующине.
12. Артемий Иванович **Иванова** — «Красный Октябрь» колхозăн председательне.
13. Неонила Дмитриевна **Ивановăна** — «Первое мая» колхозри выльăх-чĕрлĕх бригадин бригадирне.
14. Анастасия Ивановна **Климентьевăна** — «Красная Чувашия» колхозăн ĕне сăваканне.
15. Ольга Павловна **Кожуховăна** — «Социализм» колхозăн сурăх пăхаканне.
16. Иван Кузьмич **Кузьмина** — «Комбайн» колхозăн председательне.
17. Матрена Кузьминична **Матюшовăна** — «Красный труженик» колхозăн чăх-чĕп пăхаканне.
18. Таисия Кирилловна **Матюшовăна**— «Красный труженик» колхозăн сурăх пăхаканне.
19. Ефим Михайлович **Михайлова** — «Восток» колхозăн пахча-çимĕç ăстаçине.
20. Максим Григорьевич **Никифорова**— СССР Уполнаркомзагĕн Октябрьски районри агентне.
21. Михаил Гаврилович **Паминова** — «Опыт» колхозри уйхир бригадин бригадирне.
22. Степан Петрович **Петрова** — «20 лет Чувашии» колхозăн хăмла ăстаçине.
23. Яков Никифорович **Печникова** — «Красный Октябрь» колхозăн старши конюхне.
24. Павел Семенович **Портнова** — райçĕрĕç пайĕн заведующине.
25. Андрей Прокопьевич **Прокопьева**— «Венера» колхозăн председательне.
26. Анастасия Яковлевна **Пчелковăна** —«Красный Корт» колхозăн колхозницине.
27. Мария Ефимовна **Римовăна** — «13 лет Октября» колхозăн ферма заведующине.
28. Александр Лаврентьевич **Смирнова** — «Память Ленина» колхозăн машиноведне.
29. Александра Васильевна **Спиридоновăна** — «Венера» колхозри сĕт-çу фермин бригадирне.
30. Яким Тихонович **Тихонова** — «Заря» колхозăн председательне.
31. Ксения Трофимовна **Трофимовăна**— Винокуров ячĕпе тăракан колхозăн чăх-чĕп пăхаканне.
32. Василий Федорович **Федорова** — «Сталь» колхозăн председательне.
33. Василий Федорович **Федорова** — «Волгарь» колхозăн уйхир бригадин бригадирне.
34. Алексей Степанович **Чупранова** — «Красная Чувашия» колхозăн колхозникне.
35. Емельян Николаевич **Чурмакова**— Сталин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.

ПЕРВОМАЙСКИ РАЙОН ТĂРĂХ

1. Пелагея Александровна **Афанасьевăна** — «Восход» колхозăн сысна пăхаканне.
2. Евдокия Семеновна **Байдураевăна**— машинно-тракторнăй станцин трактористкине.
3. Петр Петрович **Васильева** — «Большевик» колхозăн колхозникне.
4. Трифон Васильевич **Васильева** — машинно-тракторнăй станцири трактор бригадин бригадирне.
5. Осип Михайлович **Волкова** — «Восход» колхозăн председательне.
6. Федор Семенович **Герасимова** — «Ударный» колхозăн председательне.
7. Петр Исакович **Исакова** — райçĕрĕç пайĕн старши ветеринари врачне.
8. Мария Федоровна **Кирилловăна** — Буденный ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.
9. Федор Владимирович **Козлова** — машинно-тракторнăй станцири трактор бригадин бригадирне.
10. Михаил Иванович **Кузнецова** — «Сталинград» колхозăн тимĕрçине.
11. Василий Тихонович **Марииданова**— машинно-тракторнăй станцин комбайнерне.
12. Филипп Федотович **Марлынова**, — «Краснофлотец» колхозăн пахча-çимĕç ăстаçине.
13. Александра Григорьевна **Начальниковăна** — «Совет» колхозăн ĕне сăваканне.
14. Николай Нестерович **Нестерова** — «Липовка» колхозăн хурт-хăмăр пăхаканне.
15. Зоя Васильевна **Погодинăна** — «Пионер» колхозри фермăсен заведующине.
16. Иван Матвеевич **Пузырева** — «Авангард» колхозăн председательне.
17. Василий Тимофеевич **Тимофеева** — райçĕрĕç пайĕн старши зоотехникне.
18. Игнатий Тимофеевич **Тимофеева** — «КИМ» колхозăн председательне.
19. Клавдия Егоровна **Шалтыновăна**— «Восход» колхозăн колхозницине.

ПАРАЧКАВ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Николай Васильевич **Андреева** — Максим Горький ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.
2. Николай Иванович **Баранова** — «Партизан» колхозăн колхозникне.
3. Евдокия Александровна **Бардеевăна** —«Серп и Молот» колхозăн ĕне сăваканне.
4. Ирина Ивановна **Вечеринăна** — «Большевик» колхозăн колхозницине.
5. Екатерина Ивановна **Воиновăна** — Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.
6. Елена Петровна **Гришинăна** — «Красная степь» колхозăн колхозницине.
7. Михаил Владимирович **Дубровина**— «Красный пахарь» колхозăн председательне.
8. Евдокия Григорьевна **Емашовăна** — машинно-тракторнăй станцин комбайнерне.
9. Яков Иванович **Лунькова**—машинно-тракторнăй станцин трактористне.
10. Надежда Федоровна **Лукияновăна**— «Борьба за социализм» колхозăн колхозницине.
11. Ольга Александровна **Максимовăна** — «Трактор» колхозăн пăру пăхаканне.
12. Иван Федорович **Малькова** — «Искра» колхозăн хурт-хăмăр пăхаканне.
13. Мария Яковлевна **Наумовăна** — «Луч» колхозăн колхозницине.
14. Ксения Ивановна **Овчинниковăна**— «Ильич» колхозăн колхозницине.
15. Дария Константиновна **Паутовăна** — Максим Горький ячĕпе тăракан колхозăн сысна пăхаканне.
16. Анна Григорьевна **Теленковăна** — «Восход» колхозăн колхозницине.
17. Анна Семеновна **Федотовăна** — «Луч» колхозăн колхозницине.
18. Григорий Григорьевич **Юрина** — Ленин ячĕпе тăракан колхозăн хурт-хăмăр пăхаканне.

СОВЕТСКИ РАЙОН ТĂРĂХ

1. Максим Алексеевич **Алексеева** — Советски ялсоветĕн председательне.
2. Николай Андреевич **Андреева** — «Броневик» колхозăн председательне.
3. Самсон Андреевич **Андреева** — Степан Разин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
4. Пераскова Андреевна **Андреевăна**— «Крестьянская газета» колхозăн ферма заведующине.
5. Владимир Аристархович **Аристархова** — «Трудовик» колхозăн председательне.
6. Перфирий Архипович **Архипова** — ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарьне.
7. Иван Герасимович **Герасимова** — Молотов ячĕпе тăракан колхозăн ферма заведующине.
8. Илья Григорьевич **Григорьева** — «Труд» колхозри уйхир бригадин бригадирне.
9. Николай Григорьевич **Григорьева**— «За коммунизм» колхозăн председательне.
10. Александр Дмитриевич **Дмитриева** — «Крестьянская газета» колхозăн ĕне сăваканне.
11. Андрей Дмитриевич **Дмитриева** — «Восток» колхозăн председательне.
12. Петр Данилович **Ердыкова** — «Новая жизнь» колхозăн счетоводне.
13. Герасим Ефремович **Ефремова** — «Новая жизнь» колхозăн председательне.
14. Всеволод Иванович **Иванова** — «Искра» колхозри уйхир бригадин бригадирне.
15. Любовь Ивановна **Ивановăна** — «Новый быт» колхозăн ферма заведующине.
16. Максим Ильич **Ильина** — «Трактор» колхозăн председательне.
17. Федор Кириллович **Кириллова** — Молотов ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
18. Анна Ивановна **Корзаковăна** — «Красный пахарь» колхозăн чăх-чĕп пăхаканне.
19. Мария Михеевна **Михеевăна** — «Добролет» колхозăн председательне.
20. Петр Никитич **Никитина**—Чуманкасси ялсоветĕн председательне.
21. Петр Никитич **Никитина**—ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
22. Василий Павлович **Павлова** — «Красный Октябрь» колхозăн председательне.
23. Петр Павлович **Павлова** — Молотов ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
24. Алексей Семенович **Семенова** — «Хастар» колхозăн председательне.
25. Екатерина Семеновна **Семеновăна**— «Хастар» колхозăн ĕне сăваканне.

(Малалли пулать).

Ют çĕршывсенче

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Кассино хулине тытса илнĕ хыççăн Англин 8-мĕш армийĕ, çак ситĕнÿпе хăварт усă курса, тăшмана «Гитлер линийĕ» хыçне хăваласа янă, Америкăн 5-мĕш армийĕнчи французсемпе американецсен чаçĕсем Лири шывĕнчен кăнтăртарахри тусем çинче малалла кайнă, хальхи вăхăтра вĕсем тăшман оборонин кăнтăр енчи укрепленийĕсем пулса тăракан сăртсем çинче çапăçаççĕ. Сыран хĕрринче Америка çарĕсем Формия хулине тытса илнĕ.

Ĕпер йывăр бомбардировщиксен шултăра соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, тăшманăн Балканри объекчĕсене тапăннă. Çанталăк начар тăнине пăхмасăрах, бомбардировщиксен соединенийĕсем Плоештири нефть тасатакан сооруженисем çине, çавăн пекех тата Белградпа Нише хулисенчи сортировка станцийĕсене тапăннă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири объекчĕсене те тапăннă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри авиацийĕ 2.200 вĕçев тунă.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Неапольри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Итали фронтĕнче çĕнĕрен наступлени тума пуçланăранпа союзниксен çарĕсем 125 тăваткăл миля пысăкĕш лаптăка тытса илнĕ.

АЛЖИР, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки хыпарсем тăрăх, союзниксен çарĕсем Итали фронтĕнче наступлени тума пуçланăранпа 7.000 нимĕçе тыткăна илнĕ, çав шутран 1.500 çынна Кассино хулинче тыткăна илнĕ.

АЛЖИР, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки хыпарсем тăрăх, Понтекорве районĕнчи Сан Олива умĕнче французсен çарĕсемпе американецсен танковăй чаçĕсем «Гитлер линийĕн» çирĕплетнĕ тăрăхĕ ăшне кĕрсе кайнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: майăн 19-мĕшĕнче союзниксен самолечĕсен шултăра соединенийĕсем Берлинри Брауншвейг районĕнчи объектсене тапăннă. Майăн 19-мĕшĕнче ирхине самолетсен сахалтарах йышлă соединенийĕсем Çурçĕр Францири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

ГЕРМАНИРЕ ÇУЛ СИТМЕН ÇАМРĂКСЕНЕ СЫВЛĂШРАН ТАПĂНАСРАН СЫХЛАКАН ЧАÇСЕНЕ ИЛМЕ ПУÇЛАНĂ

ЖЕНЕВА, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Фашистла нимĕç хаçачĕ—«Фелькишер Беобахтер» хаçат статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяран нимĕçсен сывлăшран тапăнасран сыхлакан чаçсенче çынсем пачах та çитменни лайăх курăнать. Хăйĕн статьинче Германи влаçĕсен «çĕнĕ директивисене» палăртса, хаçат çапла çырать: Германире сывлăшран тапăнасран сыхлакан чаçсенче ĕçлеме ачаллă хĕрарăмсене, çавăн пекех тата çул çитмен çамрăксене те 14 çултан пуçласа илмелле, тесе çырать. Хаçат малалла çапла çырать: «çĕнĕ директивăсем» тăрăх, сывлăшран тапăнасран сыхлакан чаçсене, предприятисен пуçлăхĕсем ыйтсан, йывăр çын пулнă хĕрарăмсене те илме юрать, тет.

Болгари влаçĕсем гитлеровецсене пулăшаççĕ

СТАМБУЛ, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Стамбулри журналистсем Болгари правительстви тата регент совечĕ гитлерла Германие вăрçăра вăйлăрах пулăшма пуçланине кăтартакан çĕнĕ фактсене пĕлнĕ.

Çапла пĕлтереççĕ: май уйăхĕн пуçламĕшĕнче Германин Софири посланникĕ Бекерле Болгари правительствине Берлин хушнине панă; Берлин Болгарие вăрçа «ытларах хутшăнма» хушнă. Çавăнпа майăн 6-мĕшĕнче Болгарин Берлинри посланникне Загорова София хулине чĕнсе илнĕ. Гитлер ыйтнине правительствăн черетсĕр тунă темиçе ларăвĕнче сÿтсе явнă, çав ларусенче питĕ хытă тавлашнă, теççĕ.

Болгари правительствин çавăн хыççăн тунă ĕçĕсене пăхсан, Болгари правительстви Германи хушнисене пĕр сăмахсăрах пурнăçлама килĕшни курăнать.

Болгарире официально пĕлтермесĕрех пĕтĕмĕшле мобилизаци туса ирттереççĕ, халăх çавăн пирки питĕ пăшăрханать.

Германин вăрçă машини валли пĕтĕмĕшле мобилизаци туса ирттернисĕр пуçне, Болгари правительстви Германин çĕнĕ чаçĕсене Болгарие илсе пыма ирĕк панă. Стамбулри журналистсем каланă тăрăх, Болгарие юлашки вăхăтра кулленех Германи çарĕсене тиенĕ пысăк эшелонсем пыраççĕ. Халăха хумхантарас мар тесе, Германи эшелонĕсем çĕрлехи вăхăтра пыраççĕ; çавăн пиркиех Германин чаçĕсем Болгарин пĕр-пĕр хули урлă каçнă чухне влаçсем сывлăшран тапăнни çинчен пĕлтереççĕ. Нимĕç çарĕсене тиенĕ поездсем София еннелле, Хура тинĕс хĕрринчи портсене — Варнăпа Бургаса каяççĕ. София таврашĕнчи Траян ялĕнче тата ытти ялсенче те нимĕç салтакĕсем валливаскасах бараксем тăваççĕ; нимĕç салтакĕсене вырнаçтарма София хулинчи бомбăсем сиенленĕ хăшпĕр пысăк çуртсене те юсаççĕ.

Нимĕçсем Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра Варнăпа Бургас порчĕсемпе тахçанах усă кураççĕ. Халĕ вĕсене, Болгари влаçĕсем ирĕк панипе, нимĕç çарĕн Хура тинĕсри тĕп опорнăй пункчĕсем туса хунă. Çав портсене Севастопольпе Одессăран нимĕçсен уйрăм пĕчĕк пайĕсене, Хура тинĕсре путса вилесрен çăлăнса юлнă ăскерсене, куçарнă. Кунсăр пуçне, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи вăрçă ĕçĕсем Румыни территорине куçнă пирки, нимĕçсем хăйсен çар карапĕсемпе подводнăй лодкисене Констанца портĕнчен Варна портне куçарнă. Констанца порчĕн мĕнпур оборудованине те çав портсене илсе каяççĕ.

Болгари влаçĕсем Болгарири мĕнпур чугун çулсемпе шыв çулĕсене тата мĕнпур автомобильсене Германи командованин аллине панă. Болгарире граждăнла халăха поездсемпе çÿреме пĕтĕмпе тенĕ пекех чарса лартнă, чугун çулсем Германи çарне çеç куçараççĕ.

СТАМБУЛ, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çакă паллă пулнă: Крымшăн çапăçнă вăхăтра нимĕç командованийĕ Болгарин Варна порчĕпе анлăн усă курнă. Варнăпа Крым хушшинче кулленех Германин вăрçă судpoints сем...

БОЛГАРИН ДУНАЙ ШЫВĔ ÇИНЧИ ПОРЧĔСЕМ НИМĔÇСЕН СУДНИСЕМПЕ ÇАРĔСЕНЕ ХÿТЛĔХ ПАРАÇÇĔ

СТАМБУЛ, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Журналистсем çакна пĕлнĕ: Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕпе Румыни чиккине тухса Румыни çĕрне кĕрсе кайнă хыççăн нимĕçсем, совет авиацийĕ Дунай шывĕ çинчи Румыни порчĕсене пырса çапасран хăраса, хăйсен Дунай çинчи флотне тата çар склачĕсене те Румыни порчĕсенчен Болгари порчĕсене куçарма пуçланă. Болгари порчĕсем çавăн пекех тата Румыни суднисене те хÿтлĕх параççĕ. Сăмахран, çак паллă пулса тăнă: нимĕçсемпе румынсен танкерĕсем румынсен Джурджу портĕнче нефть тиенĕ хыççăн Дунай шывĕн тепĕр хĕррине каяççĕ те, болгарсен Рущук портĕнче пытанаççĕ. Нимĕçсем хăйсен çарĕсемпе вăрçă хатĕрĕсене тата горючие Дунай шывĕ тăрăх куçарнă чухне Болгарин Видин, Лом, Никопол, Свищов, Рущук порчĕсемпе усă кураççĕ. Çапла ĕнтĕ, Болгари правительстви çиелтен пăхнипе, Болгари влаçĕсем гитлеровецсене Болгарин Дунай шывĕ çинчи порчĕсемпе Совет Союзне хирĕç тăрса вăрçас ĕçре усă курма пулăшаççĕ.

КĔСКЕН

▲ Халĕ США территорийĕнче 183.618 тыткăна илнĕ çын пурăнать. Вăл шутра —133.135 нимĕç, 50.136 италянец, 347 японец.

ПРОИЗВОДСТВĂЛЛĂ ПРОФСОЮЗСЕН КОНГРЕСĔ ПРЕЗИДЕНТ ПУЛМА КАЛЛЕХ РУЗВЕЛЬТА СУЙЛАСШĂН

НЬЮ-ЙОРК, майăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Производствăллă профсоюзсен конгресĕн (вăл 5 миллион члена пĕрлештерсе тăрать) политикăллă ĕçсене туса тăракан комитечĕ Рузвельта тăваттăмĕш хут президента суйлама сĕннине ырланă.

НИМĔÇСЕМ ИСКУССТВĂН ЧИ ПАЛЛĂ ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕНЕ ÇАРАТАÇÇĔ

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçат çапла пĕлтерет: Лондонра илнĕ тĕрĕс хыпарсем тăрăх, фашистсен пуçлăхĕсем оккупациленĕ çĕршывсенче тытса илнĕ пĕтĕм тĕнчери искусствăн чи паллă произведенийĕсене нумайĕшне хăйсем валли илнĕ. Европа искусствин чи паллă произведенийĕсенчен пĕрне — Ван-Эйкăн «Сурăх путеккине пуççапни» ятлă картинине—вăрçă пуçлансанах Бельгирен Францие янă пулнă. Юлашки хыпарсем тăрăх, çав картинăна халĕ Францирен Берхтесгадена Гитлер патне янă. Çавăн пекех нимĕçсем чи паллă мастерсен картинисен пысăк коллекцине тытса илнĕ, çав шутра Леонардо да Винчи ÿкернĕ «Мона Лиза» ятлă питĕ паха картина пур. Вăл картина вăрçă пуçланиччен Лувр хулинче сыхланса тăнă, унтан ăна Францири пĕр хулана янă пулнă. Нумаях пулмасть Голландирен Германие Рембранд ÿкернĕ «Каçхи хурал» картинăна илсе кайнă, çавăн пекех тата Франс Гальс ÿкернĕ «Кулакан салтак» ятлă картинăна та илсе кайнă.

Физкультура отечественнăй вăрçа пулăшма тивĕçлĕ

Хĕрлĕ Çар валли çĕнĕ боецсем хатĕрлес тĕлĕшри кирлĕ ĕçсенчен пĕри—çамрăксене ÿт-пÿ тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма хатĕрлесси. Çакă вăл халăха çар ĕçне вĕрентес пĕтĕм ĕçĕн уйăрăлми пайĕ пулса тăрать.

Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан Отечественнăй вăрçă совет çамрăкĕсем шухăш-кăмăл тата ÿт-пÿ тĕлĕшĕнчен мĕн чухлĕ çирĕп пулнине, вĕсем йывăрлăхсене çĕнтерме, фронтри йывăр пурнăçа тÿссе ирттерме мĕн чухлĕ чăтăмлăн тĕрĕслет. Çамрăксем çав тĕрĕслеве чыслăн тÿсе ирттереççĕ.

Пирĕн республикăри физкультурăпа комсомол организацийĕсем иртнĕ хĕлре комсомолецсемпе çамрăксене ÿт-пÿ тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма хатĕрлес тата спорт тĕлĕшĕнчен хăнăхусем парас тĕлĕшпе пысăк мероприятисем чылай туса ирттерчĕç. Хĕл вăхăтĕнче 30 сехетлĕ программăпа 11.494 йĕлтĕрçĕ-боец, 20 сехетлĕ программăпа 16.154 йĕлтĕрçĕ-боец тата 1.005 обществăллă инструктор хатĕрленĕ. Профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне 127.760 çамрăк хутшăннă. Колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсене 22.916 çамрăк хутшăннă.

Республикăри ăмăртура паха тĕслĕх кăтартнă Етĕрне районĕнчи «17 партсъезд» колхозри йĕлтĕрçĕсен командине ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн Хисеплĕ грамотипе награждăланă тата спорт инвентарĕн комплектне панă. Ял çамрăкĕсен республикăри йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсенче мала тухнăшăн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Удикова колхозницăна ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă тата хаклă парнесем панă. Кунсăр пуçне эстафетăсем, йĕлтĕрлĕ чупусем тата спортăн ытти енĕсемпе те ăмăртусем ирттернĕ.

Анчах çакна палăртмалла: çамрăксене ÿт-пÿ тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма хатĕрлес ĕçре хăшпĕр утăмсем тунă пулсан та, комсомолпа физкультура организацийĕсем нумайăшĕ ку ĕçе тивĕçлипе ертсе пынă теме çук-ха. Çамрăксене çирĕп сывлăхлă пулма хатĕрлес тĕлĕшпе кулленех çине тăрса ĕçлес вырăнне, физкультурăна çамрăксен йăлине кĕртес вырăнне, чылай çĕрте ку ĕçе ним хатĕрленмесĕр ăмăрту, эстафетăсем ирттернипех чарса лартаççĕ.

Республикăри комсомолпа физкультура организацийĕсем физкультура кадрĕсем —обществăллă инструкторсем, командăсен капитанĕсем, спорт судьисем хатĕрлес енĕпе пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ; хуласенче, район центрĕсенче, предприятисенче спорт шкулĕсем уçмаççĕ, курссемпе семинарсем ирттермеççĕ. Комсомолпа физкультура организацийĕсен хăшпĕр руководителĕсем спорт япалисене тирпейлĕ тытма тăрăшмаççĕ. Çавăн пекех комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе спорт площадкисем тăвас ĕçе те çителĕксĕр сарса янă.

Пурне те паллă ĕнтĕ: çар ĕçне вĕрентессине, спорт аталантармалли массăллă ĕçе стадионсенче, спорт площадкисенче, шыв станцийĕсенче йĕркелесе пымалла. Пирĕн республикăри физкультурăн яланхи базисем сахал мар, анчах вĕсемпе тĕрĕс усă курман тата комсомол организацийĕсем вĕсене сыхласа усрассишĕн тăрăшман (пирки, Çĕмĕрле, Элĕк, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне районĕсенче стадионсем ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсем куçĕ умĕнчех ишĕле-ишĕле пыраççĕ. Унта, стадионсен хÿмисене ишнине тата вĕсене унта-кунта йăта-йăта кайнипе курса тăркаçах, нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ, унти руководительсем вара стадион çĕрĕсене пахча тумашкăн сухаласси çинчен калаçма та кăмăлмаççĕ.

Çанвашкал çăмăлттайла руководительсене калех ответ тыттармалла, стадионсенче, спорт базисен тата шыв станцийĕсен ĕçне йĕркелемелле. Предприятисенче, колхозсенче тата çамрăксем пурăнакан общежитисенче çĕнĕ площадкăсем тăвас ĕçе те анлăн сарса яма тахçанах вăхăт ĕнтĕ. Çакă вăл—комсомол организацийĕсен чыслă ĕçĕ.

Комсомол организацин хăшпĕр руководителĕсем час-часах спорт инвентарĕсем çитмеççĕ тесе пуплешеççĕ. Анчах вĕсем хăшпĕр инвентарьсене вырăнтах туса хатĕрлесси çинчен сăмах та хускатмаççĕ-ха, спорт инвентарьне центртан çителĕклĕ таранах ярса парасса кĕтсе пурăнаççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе спорт инвентарĕсем, оборудованисем хатĕрлес ĕçе ответлă ĕç вырăнне хумалла.

Комсомол организацийĕсем физкультурăпа спорт ĕçне спорт обществисенчен уйрăммăн, пĕр-пĕринпе килĕшмесĕр туса пыма пăхаççĕ. Спорт обществисене ертсе пымаççĕ, спорт обществисен ĕçĕнчи ситменлĕхсене пĕтерме тăрăшмаççĕ, физкультура коллективĕсене ертсе пыма активистсене уйăрса лартмаççĕ тата çирĕплетме тăрăшмаççĕ. Спорт обществисен ĕçне йĕркелесе ертсе пырас вырăнне, комсомол организацийĕсен хăшпĕр руководителĕсем час-часах физкультура организацисен ĕçне айккинчен сăнаса тăнипех ирттерсе яраççĕ, спорт обществисен ситменлĕхĕсене хапăллăнах шутласа тухаççĕ, çав вăхăтрах вĕсем çав обществăсенче комсомолецсемпе çамрăксем тăнине, физкультурăпа спорт ĕçĕсен секцийĕсем, командисем, кружокĕсем йĕркеллĕ ĕçленĕшĕн пуринчен малтан комсомол организацийĕсем ответлă пулса тăнине манаççĕ. Комсомол активисчĕсем, комсомолăн пуçламăш организацийĕсен, райкомĕсемпе горкомĕсен секретарĕсем хăйсене ÿт-пÿ тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма хатĕрлессине хакламаççĕ. Çапла вара вĕсем хăйсем те стадионсене, спорт площадкисене çÿремеççĕ, спорт ăмăртăвĕсенче спартакиадăсене, походсене хутшăнмаççĕ, ГТО значокĕн нормисене памаççĕ.

Физкультура коллективĕсемпе спорт обществисенче агитаципе пропаганда ĕçне начар йĕркеленĕ. ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсем çарпа физкультура ĕçне вĕренес ыйтусене сÿтсе-явмашкăн пухусем, активсем сайра хутра çеç ирттереççĕ, çамрăксем хушшинче физкультурăпа спорт çинчен çителĕксĕр ăнлантарса параççĕ, спорт ыйтăвĕсемпе докладсемпе лекцисем, вечерсем ирттермеççĕ, физкультурниксен массăллă выступленийĕсене организацилемеççĕ тата ытти те.

Ĕçре çакăн пек ситменлĕхсем пулнине урăх нимĕнпе те мар, ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен секретарĕсем тата çарпа физкультура комиссийĕсем физкультура организацийĕсен ĕçне тĕпчесе вĕренме тăрăшманнипе, вĕсем комсомолецсемпе çамрăксене ÿт-пÿ тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма хатĕрлесси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхнипе çеç ăнлантарса пама пулать. Ишлей, Комсомольски, Шăмăршă, Тăвай районĕсенче 5—6 уйăх хушши ĕнтĕ физкультурăпа спорт ĕçĕн районри комитечĕсен председателĕсем çукки çакна тепĕр хут çирĕплетсе парать.

Çуллахи ăшă кунсем пуçланчĕç. Çу вăхăтĕнче çарпа спорт ĕçне вăйлатма пур майсем те пур. Çăмăл атлетика енĕпе, çар гимнастики енĕпе, шывра ишес, походсем ирттерес тата ытти енĕпе те ăмăртусем ирттерме пулать. Çак ĕçсене кашни комсомол организацийĕн планне кĕртмелле. Республикăри кашни комсомолецпа комсомолкăн, сывлăх тĕлĕшĕпе физкультурăпа спорта хутшăнма ирĕк панă пулсан, 1944 çулта ГТО пĕррмĕш сыпăк значокĕн нормисене парса пĕтермелле.

Çамрăксене çирĕп сывлăхлă та патвар пулма хатĕрлесси—Хĕрлĕ Çарпа совет тылĕ валли сывлăхлă, çирĕп тата чăтăмлă çамрăксем хатĕрлес тĕлĕшри государствăллă кирлĕ ĕç. Физкультура Отечественнăй аслă вăрçа пулăшса тăма тивĕçлĕ.

Г. ПЕТРУХИН,

ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

—⊙—

Чăваш АССР Прокуратуринче

Шупашкар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн председательне П. Ф. Фомина çуракине ирттерес ĕç çине чунсăррăн пăхнăшăн тата кирлĕ пек ертсе пыманшăн суда панă.

Çак колхозра çураки ĕçĕ ытла та вăраха кайнă. Ака ĕçне кая юлса тытăннă. Агротехникăна пурнăçласа пыман. Сухаласса 5—6 сантиметр тарăнăш кăна сухаланă, юсавлă икĕ сеялка пур çинчех алăпа акнă. Вăрлăхсене яровизацилемен тата имçамсемпе чÿхемен. Ĕç планĕ çук. Ĕç тухăçлăхĕ начар.

Фомина председатель ĕçĕнчен кăларнă. Халăх сучĕ ăна çакăн пек япăх ĕçленĕшĕн пĕр çултăлăк хушши ирĕксĕр ĕçлеттермелле тунă.

—⊙—

Пĕлтерÿ

Совет çамрăкĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕ çак çулхи майăн 21-мĕшĕнче Мускавра совет çамрăкĕсен фашизма хирĕçле 3-мĕш митингне туса ирттерет. Митинг Мускав вăхăчĕпе кăнтăрла иртсен 4 сехетре пуçланать. Митинга радио тăрăх параççĕ.

Совет çамрăкĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00139

Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз.